24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
СЕНТЯБРЬ
7
ВЫРСАРНИКУН
211 (5926) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Пурте воскреснике!

Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен кунне уявласа ирттерме империализмлă пĕрремĕш вăрçăн йывăр вăхăтĕнче, пĕтĕм çĕр чĕмăрне тупăсен кĕрлевĕпе тар тĕтĕмĕ сырса илнĕ вăхăтра пуçланă. Çакă вăл пĕтĕм тĕнчери çамрăксем империализмлă юнлă вăрçа хирĕç, миллионшар сынсене вăрçă вучахне пăрахнине хирĕç пĕтĕм чун-чĕрепе тарăхса протестлени пулнă. Тискер вăрçа хирĕç, этем чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн çĕкленĕ ялав айĕнче тĕнчери нумай миллионлă ĕççамрăксем пĕрлешнĕ.

Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен 27-мĕш кунĕ империализмлă иккĕмĕш вăрçă вăхăчĕпе тĕл килчĕ. Германи фашисчĕсен гитлерла бандисем чĕртсе янă вăрçă вучĕ пĕтĕм çĕр чĕмăрне ярса илнĕ. Çынçиексен фашистла çарĕ ирĕн тăван çĕршыв çине—кашни сыхна чăн-чăн ирĕклĕхпе телей панă ăи демократиллĕ çĕршыв çине вăрă-хурахла ултавлăн тапăнса кĕрсе халиччен истори курман, тĕнче илтмен тискер преступлени турĕ.

— Юншăн—юн! Вилĕмшĕн—вилĕм! — тесе хаярăн ответлерĕмĕр эпир фашистсен вăрă-хурахла ĕçĕ çине. Нумай миллионлă аслă совет халăхĕ юнлă гитлеризма хирĕç татăклă сапăçăва çĕкленчĕ. Тĕнчери мĕнпур халăхсен Гермени фашизмне хирĕç пыракан вăрçине совет халăхĕпе унăн Хĕрлĕ Çарĕ пуçарса пыраççĕ.

Çурçĕрти Пăрлă океанран пуçласа Хура тинĕс патне çити тăсăлакан гигантла фронтăн малти позицийĕсенче совет çамрăкĕсем çапăçаççĕ. Совет çамрăкĕсем—сталинла чаплă соколсем сывлăшран фашистсен çăханĕсене çапа-çапа антараççĕ, совет çамрăкĕсем—паттăр танкистсем хăйсен хăватлă машинисемпе фашистла йыткĕтĕвĕсене таптаççĕ, совет çамрăкĕсем—хастар пехотинесем хăйсен хурçа штыкĕсемпе фашистсен çĕршĕннĕ ӳчĕсене çăкле-çăкле переççĕ. Пирĕн совет çамрăкĕсем тĕнчери мĕнпур ĕççамрăкĕсен ирĕклĕхне чыслăхлăн пыракан кĕрешĕвне пуçарса пыраççĕ.

Иртнĕ çулсенче пĕтĕм тĕнчери çамрăксен кунне пирĕн совет çамрăкĕсем чаплă демонстрацисем туса уявласа ирттернĕ, ширĕн çамрăк ăру тăван çĕршыв чыслăхĕшĕн кĕрешме хатĕр тăнине çулсерен çав демонстрацисенче пăхса тухнă. Кăçал совет çамрăкĕсем хăйсен вăй-хăвачĕпе паттăрлăхне çапăçу уйăрĕсенче, предприятисемпе колхозсенче хамăрăн çĕнтерĕве туптанă çĕрте кăтартса параççĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ пĕтĕм тĕнчери çамрăксен кунĕнче кăçал, парадсемпе демонстрацисем вырăнне, фронта пулăшас, çĕршыв оборонин фондне татах та ытларах хăватлатрас шутпа, çамрăксен Пĕтĕм Союзри воскресникне туса ирттерме палăртрĕ. Совет çамрăкĕсем тăван çĕршыва чĕререн юратнине кăтартса паракан çак массăллă движени сарăлсах пырать. Кăçал августăн 17-мĕшĕнче пулса иртнĕ пĕрремĕш воскресникре çĕршыври миллионшар çамрăксем тухрĕç.

Пирĕн Чăваш республикинче çав кун воскресникре пĕтĕмпе 130 пин сынна яхăн хутшăннă. Çамрăксемпе пĕрле ваттисем те ĕçе тухнă. Çамрăк хастарлăхпа ĕçлесе пĕр кун хушшинче пĕтĕм республикипе оборона фондне колхозниксем 100 пин ĕçкунне яхăн, хуласенчи тата рабочи поселоксенчи çамрăксем укçан 70 пин тенкĕ ытла панă. Воскресник Чăваш республикин столицинче—Шупашкарта тата Хĕрлĕ Чутай, Октябрьски, Тăвай, Сĕнтĕрвăрри районĕсенче уйрăмах пысăк активлăхпа иртнĕ. Çав кун Шупашкар хулинче воскреснике 5.459 çын тухса ĕçленĕ, вĕсем оборона фондне 22.174 тенкĕ панă. Канаш станцинчи депора ĕçлекен комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем хăйсем кăна çав кун оборона фондне 2.447 тенкĕлĕх ĕçлесе панă.

Иртнĕ воскресникре тунă паха опытсемпе ситменлĕхсене шута илсе, паянхи воскреснике тата организованнăрах туса ирттермелле. Районсенчен пĕлтернĕ тăрăх воскресник çавăн пек хастарлăхпа пулса иртмелле те. Çĕмĕрле районĕнче паян воскреснике пĕтĕмпе 10 пин сынна яхăн тухмалла, вĕсенчен хулари учрежденисенчи 2 пин çын чугунçул çине ĕçлеме тухаççĕ. Çавăн пекех ытти вырăнсенче те.

Производствăри çамрăксем паян хăйсен предприятийĕсенчех ĕçлеççĕ. Çак куна вĕсем двухсотниксем йышне, нумай станоксем çинче ĕçлекен стахановецсемпе ударниксен йышне татах та ытларах ӳстернипе палăрма тăваççĕ. Вĕсем фронта валли çĕнĕрен продукци парса, хăйсен çак кунхи ĕç укçийĕсене оборона фондне хываççĕ.

Колхозсенчи çамрăксем колхоз производствинче ĕçлеççĕ, уборка ĕçне хăвăртлатаççĕ. Халĕ республикăра силос хывас тĕлĕппе декадник иртсе пырать. Колхоз çамрăксем паян çĕнĕрен темиçе çĕршер тонна силос хывса, общественниллă выльăх-чĕрлĕх валли сĕтеклĕ апат-çимĕç хатĕрлесе хураççĕ, çапла çĕршывăн продовольстви фондне ӳстерме пулăшаççĕ.

Совет учрежденийĕсенче ĕçлекенсем республика чугунçулĕсем çине, строительствăсене, пристаньсене, вăрмана ĕçлеме, çулйĕрсене юсама тухаççĕ. Темиçе пиншер çын фронтри хĕрӳллĕхпе ĕçлесе, çĕршыв оборонин фондне татах та ытларах хăватлантараççĕ.

Çамрăксен Пĕтĕм Союзри иккĕмĕш воскресникне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ йĕркелĕхпе туса ирттерер. Паянхи хĕрӳллĕ ĕçе комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксене кăна мар, мĕнпур ĕçсыннисене хутшăнтарар. Паянхи кун пирĕн совет çамрăкĕсем тăван çĕршыва укçа-тенкĕ кăна мар параççĕ, вĕсем тăван çĕршыв ирĕклĕхпе чыслăхĕшĕн паттăрăн кĕрешме хатĕр тăнине çулсерен çав демонстрацисенче пăхса тухнă. Кăçал совет çамрăкĕсем хăйсен вăй-хăвачĕпе паттăрлăхне çапăçу уйăрĕсенче, предприятисемпе колхозсенче хамăрăн çĕнтерĕве туптанă çĕрте кăтартса параççĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ пĕтĕм тĕнчери çамрăксен кунĕнче кăçал, парадсемпе демонстрацисем вырăнне, фронта пулăшас, çĕршыв оборонин фондне татах та ытларах хăватлатрас шутпа, çамрăксен Пĕтĕм Союзри воскресникне туса ирттерме палăртрĕ. Совет çамрăкĕсем тăван çĕршыва чĕререн юратнине кăтартса паракан çак массăллă движени сарăлсах пырать. Кăçал августăн 17-мĕшĕнче пулса иртнĕ пĕрремĕш воскресникре çĕршыври миллионшар çамрăксем тухрĕç.

Пирĕн Чăваш республикинче çав кун воскресникре пĕтĕмпе 130 пин сынна яхăн хутшăннă. Çамрăксемпе пĕрле ваттисем те ĕçе тухнă. Çамрăк хастарлăхпа ĕçлесе пĕр кун хушшинче пĕтĕм республикипе оборона фондне колхозниксем 100 пин ĕçкунне яхăн, хуласенчи тата рабочи поселоксенчи çамрăксем укçан 70 пин тенкĕ ытла панă. Воскресник Чăваш республикин столицинче—Шупашкарта тата Хĕрлĕ Чутай, Октябрьски, Тăвай, Сĕнтĕрвăрри районĕсенче уйрăмах пысăк активлăхпа иртнĕ. Çав кун Шупашкар хулинче воскреснике 5.459 çын тухса ĕçленĕ, вĕсем оборона фондне 22.174 тенкĕ панă. Канаш станцинчи депора ĕçлекен комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем хăйсем кăна çав кун оборона фондне 2.447 тенкĕлĕх ĕçлесе панă.

Иртнĕ воскресникре тунă паха опытсемпе ситменлĕхсене шута илсе, паянхи воскреснике тата организованнăрах туса ирттермелле. Районсенчен пĕлтернĕ тăрăх воскресник çавăн пек хастарлăхпа пулса иртмелле те. Çĕмĕрле районĕнче паян воскреснике пĕтĕмпе 10 пин сынна яхăн тухмалла, вĕсенчен хулари учрежденисенчи 2 пин çын чугунçул çине ĕçлеме тухаççĕ. Çавăн пекех ытти вырăнсенче те.

Производствăри çамрăксем паян хăйсен предприятийĕсенчех ĕçлеççĕ. Çак куна вĕсем двухсотниксем йышне, нумай станоксем çинче ĕçлекен стахановецсемпе ударниксен йышне татах та ытларах ӳстернипе палăрма тăваççĕ. Вĕсем фронта валли çĕнĕрен продукци парса, хăйсен çак кунхи ĕç укçийĕсене оборона фондне хываççĕ.

Колхозсенчи çамрăксем колхоз производствинче ĕçлеççĕ, уборка ĕçне хăвăртлатаççĕ. Халĕ республикăра силос хывас тĕлĕппе декадник иртсе пырать. Колхоз çамрăксем паян çĕнĕрен темиçе çĕршер тонна силос хывса, общественниллă выльăх-чĕрлĕх валли сĕтеклĕ апат-çимĕç хатĕрлесе хураççĕ, çапла çĕршывăн продовольстви фондне ӳстерме пулăшаççĕ.

Совет учрежденийĕсенче ĕçлекенсем республика чугунçулĕсем çине, строительствăсене, пристаньсене, вăрмана ĕçлеме, çулйĕрсене юсама тухаççĕ. Темиçе пиншер çын фронтри хĕрӳллĕхпе ĕçлесе, çĕршыв оборонин фондне татах та ытларах хăватлантараççĕ.

Çамрăксен Пĕтĕм Союзри иккĕмĕш воскресникне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ йĕркелĕхпе туса ирттерер. Паянхи хĕрӳллĕ ĕçе комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксене кăна мар, мĕнпур ĕçсыннисене хутшăнтарар. Паянхи кун пирĕн совет çамрăкĕсем тăван çĕршыва укçа-тенкĕ кăна мар параççĕ, вĕсем тăван çĕршыв ирĕклĕхпе чыслăхĕшĕ

Укерчĕк çинче: Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн командирĕсен группи, Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн вĕсене Совет Союз Геройĕн званине панă. **Сулахăйран сылтăмалла:** капитан М. Н. Плоткин, кĕçĕн лейтенант Д. А. Зайцев, капитан В. А. Гречишников, капитан Н. А. Сдобнов, лейтенант В. Г. Каменьщиков, полковник Е. Н. Преображенский, полковник А. И. Лизюков, кĕçĕн лейтенант С. Г. Ридный, капитан Ф. А. Баталов тата старший лейтенант И. И. Иванов. (ТАСС фотоӳкерчĕкĕ).

Совет самолечĕсем Берлин çине пырса тапăнни

Сентябрĕн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле совет самолечĕсем Берлин çине вĕçсе пырса, çар тата промышленность объекчĕсем çине вут чĕртекен тата фугаслă бомбăсем пăрахнă. Берлинра пушарсемпе взрывсем пулни курăннă.

Пĕр самолетсăр пуçне, пирĕн самолетсем шутне хăйсен базисене тавăрăннă. Тавăрăнман самолета шыраççĕ.

Паян—комсомолецсемпе çамрăксен иккĕмĕш воскресникĕ

ВАРНАР. Ĕçлеме пултаракан пур комсомолецсемпе çамрăксем те паян инструментсем йăтса воскресника тухаççĕ. Вĕсем хĕрӳ ĕçре çамрăксен Пĕтĕм Тĕнчери Кунне паллă тăваççĕ. Райцентрти 85 çын чугунçул çинче ĕçлеççĕ. Вăрнарти вăтам шкулта вĕренекен 200 ача, хăйсен вĕрентекенĕсем ертсе пынипе, Санарпуç колхозне, Вăрнарти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем 150 ача Çĕнĕ Яхаткасси колхозне пулăшма каяççĕ. Ачасен санаторинче ĕçлекенсем 40 çын Кольцовкăри Сталин юлташ ячĕпе тăракан колхоза уборкăра пулăшаççĕ. Ялсенчи комсомолецсемпе çамрăксем, аслă классенче вĕренекен ачасем колхозсенчи тĕрлĕ ĕçсене хутшăнаççĕ. Кĕçĕн классенче вĕренекенсем вăрманта кăмпа пухаççĕ.

АНДРЕЕВ.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

* * *

ШАХАСАН. Районри мĕнпур çамрăксем хĕрӳ ĕçре. В-Девлезер, Чул-Кăмака, Ухман, Çĕнĕ-Пинер колхозĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем 40 çын чугунçул тӳрлетеççĕ. Райцентрти учрежденисенче ĕçлекенсем 60 çын «Победа» колхоза уборкăра пулăшаççĕ. Колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем, шкул ачисем хăйсен колхозĕнче ĕçлеççĕ. Паян, çамрăксен Пĕтĕм Тĕнчери кунĕ ячĕпе, 5 пин çын оборона фончĕ валли ĕçлеме тухаççĕ.

М. АЛЕКСЕЕВА.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

* * *

УЛАТĂР. Паян районĕпе 4 пинрен кая мар комсомолецсемпе çамрăксем воскресникре пулаççĕ. Унсăр пуçне, нумай предприятисемпе учрежденисенче воскресникре пур рабочисем те тухма килĕшнĕ. Паровозсем юсакан завод, депо, типографи воскресникре пĕтĕм коллективĕпе тухаççĕ. Улатăр хулинчи вăтам шкулсенче вĕренекенсем 500 çын колхозсене пулăшма каяççĕ.

Промартелсенчи тата предприятисенчи комсомолецсемпе çамрăксем хăйсен ĕçĕсенех тăваççĕ. Колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем, ялсенчи вĕренекен ачасем колхозсене уборкăра ăнса пулнă тырра пуçтарма пулăшаççĕ.

ФЕДОРОВ.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

* * *

КУКЕÇ. Районри комсомолецсемпе çамрăксем паянхи куна нумайранпа кĕтрĕç. Кашни пуçламĕш организаци çамрăксен Пĕтĕм Тĕнчери Кунне хатăрлăн ĕçленипе паллă тăвасшăн. Сентябрĕн 7-мĕшĕнче кам ăста ĕçлемеллине паллă туса хунă, кирлĕ инвентарьсене хатĕрленĕ. Райцентрти учрежденисенчи комсомолецсемпе çамрăксем 60 çын ĕнерех «КИМ» колхоза пулăшма тухса кайнă. Кӳкеçри вăтам шкулта вĕренекенсем «Трактор» колхозра ĕçлеççĕ. Ялсенчи шкулсенче вĕренекенсем, комсомолецсемпе çамрăксем хăйсен колхозĕсене уборкăра пулăшаççĕ. Чемушара тата ытти пуçламĕш шкулсенче вĕренекенсем эмел тумалли ӳсен-тăрансене пухаççĕ.

А. ОХАНДЕРОВА.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

* * *

ВАРМАР. Паян районĕпе 10 пин çынна яхăн хĕрӳ ĕçре, вĕсенчен 3 пинĕ — комсомолецсемпе çамрăксем. Райцентрти пур учрежденисенче ĕçлекенсем те пĕтĕм коллективĕпех оборона фончĕ валли ĕçлеме тухнă. Вăтам шкулта аслă классенче вĕренекенсем, райцентрти хăшпĕр учрежденисенче ĕçлекенсем 125 çын тырă хатĕрлекен пунктра ĕçлеççĕ. Вăрмар поселокĕнчен 67 çын Чупай ялĕ патне чугунçул çине ĕçлеме кайнă. Энĕшпуç участокĕнче 40 çын вăрман касаççĕ. Фабрикăри рабочисем хăйсен производствинче ĕçлеççĕ. Ялсенчи комсомолецсемпе çамрăксем, шкул ачисем колхозсенче çуртри вираççĕ, аван çапаççĕ, уборкăра пулăшаççĕ.

А. АВЕРЬЯНОВА.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Шкул ачисен пулăшăвĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Киров ячĕпе тăракан колхозри пионерсемпе шкул ачисем колхоза пысăк тухăçлă тырпула пухса кĕме пулăшнипе, пĕрлех, çĕршыв оборони валли 300 килограмма яхăн тимĕр-тăмăр пухса панăç. Тимĕр-тăмăр пухас тĕлĕшпе уйрăмăнах Петр Михайловпа Петр Чернов пионерсем тăрăшса ĕçлерĕç.

А. ТУКМАКОВ.

КАТЕМПИ

Тыткăна лекнĕ нимĕç хĕлĕх пек тăсăлса военком умĕнче тăрать.

Вăл—бронетанковăй полкăн ефрейторĕ.

Унăн сăн-пичĕ тĕлĕнмелле. Вăл Гитлер сăнлă. Унăн пĕчĕкçĕ мăйăхĕ пур. Сӳçне çамки çинелле туранă. Темĕнле тилĕ пек кулкалать.

Ефрейтор «фюрер» тĕслĕ пулнине никам та асăрхаса илмен пулĕччĕ, анчах ефрейтор çакăн çине пăхма хăй ыйтрĕ.

— Фюрер господин шортречĕ вырăсене çителĕклĕ паллă мар пулĕ. Эпĕ тĕлĕнместĕп, хăнăхса ситнĕ,—терĕ вăл.

— Эсир Гитлерпа пĕр сăнарлă пулни питĕ палăрать-и?—тесе ыйтрĕ военком.

— Эпĕ ӳстерсе каламастăп,—Германире тата Польшăра мана курсан, сынсем чĕтресе ӳкетчĕç,—терĕ вăл.

— Эсир ăна юриех тăватăр-и, е хăй тĕллĕн пулса пырать-и?

— Вăл хăй тĕллĕн пулса пымасть,—тет ефрейтор,—эпĕ çапла пулас тесе икĕ çул ĕçленĕ. «Господин Гитлер Компьен вăрманĕнче» ятлă картинăна сакăр хут пăхрăм. Гитлер мĕнле кăшт çеç ухсакланисене те, утнине, аллисене сулланисене, кулнине вĕрентĕм. Манăн полкри офицерсем мана курсан хăраса шураласах каяччĕç.

— Кун пек вăйă сире мĕн тума кирлĕ пулчĕ?—тесе ыйтрĕ военком.

— Ку вăйă мар. Унта государствăлă пысăк шухăш. Кашни çар чăсĕнче, кирек мĕнле управленинче те господин Гитлер тесле сын пулмалла, тесе шутлаттăм эпĕ. Вăл пысăк результатсем пама пултарать. Кашни минутăрах салтак хăйĕн умĕнче господин Гитлер сăнне курать. Вăл хăраса тăрать. Сехри хăпăр, чĕтретĕр. Çавăнпа та вара командовани ыйтнине яланах пурнăçа кĕртме хатĕр тăрать.

Çаран ытти чăсĕсенче та çавăн пек катемписем пур-и? — тесе ыйтать военком.

— Эпĕ ăна пĕлме пултараймастăп,—тет ефрейтор,—çук пулĕ, пулсан та пур çĕрте те мар тесе шухăшлатăп эпĕ. Виçĕ уйăх каярах эпĕ полк командирне докладной записка патăм. Полк командирĕ ăна дивизи начальникне пама шантарчĕ.—Сирĕн идейăра ăслă япала пур. Кун пек тусан, çар çăмăлах ăсталăх кирлĕ мар пулать,—терĕ вăл.

Военком кулса ячĕ, вара çапла каларĕ:

— Полк командирĕ калани витĕмлĕ пулайман—полка çапса аркатса çĕмĕрсе тăкнă. «Фюрерăн» полномочнăй представителĕ тыткăна лекнĕ.

Ефрейтор кăмăлсăрланса йывăрăн сывласа илчĕ. Вăл çапла каларĕ:

— Çапла çав, эпĕ тыткăна лекни манăн полкшăн пысăк телейсĕрлĕх пулса тăчĕ.

— Çĕмĕрсе тăкнă полкшăн эсир çĕр çинче-и, пĕлĕт çинче-и—пурпĕрех,—тесе хушса хучĕ военком.

— Вăрçăччен эсир ăста, кам пулса ĕçленĕ? Сирĕн мĕнле професси пулнă? —ыйтрĕ унтан военком.

Çак прозăллă ыйту ефрейтора хаваслă ответ пама кăмăлне çĕклемерĕ. Вăл сивĕ сассипа çапла каларĕ:

— Сыр пĕçерекен пысăк мар фабрика пур. Анчах та ку мана государство ĕçĕсем çинчен шухăшлама чăрмантарман.

Тыткăна лекнĕскер кунта татах хăйĕн идейи çинчен каласа çаптăнччĕ пулас, анчах военком тыткăна лекнĕ тепĕр нимĕçе илсе килме хушрĕ.

Гитлер сăнарлă ефрейтора пӳртрен килкартине илсе тухрĕç.

Тыткăна лекнисем, илсе тухса каяса кĕтсе, килкартинче тăраççĕ.

Ефрейтор хăйĕнпе пĕр полкра пулнисем патне хăйне мăскăлланă тытса пычĕ, вĕсем çине хăяккăн та тискеррĕн пăхса илчĕ.

Тыткăна лекнисенчен пĕри кулса илчĕ, ефрейторăн ĕнсе чиккинчен çапса, хыттăн:

— Пирĕн Адольф Гитлера пĕтме тӳрĕ килчĕ—терĕ.

Ефрейтор хăрушă сăн илчĕ, анчах пĕри:

— Куçусене ан вылят—хăракансем çук,—тесе кăшкăрчĕ.

Тата тепри çилленсе сăмах хушрĕ:

— Çак йытăран полкра канăç çукчĕ. Кунта та вăл хăйĕн выränнех йышăнма хăтланать,—терĕ.

Ефрейтор хăраса куçĕсене мăчлатарчĕ, ӳт-пӳне ахальтерех тытса пăрăнчĕ, çăкăр чăмлама тытăнчĕ.

Мих. ЗОЩЕНКО.

Партизансен отрячĕн командирĕ

...Граждан вăрçин йывăр çулĕсенче Павел К. Сергей Миронович Кирова час-часах курса калаçнă. Мироныч Павелăн шухăш-кăмăлне тĕплĕн пĕлнĕ те, ăна ĕç тупса панă, партизансен отрячĕн командирĕ тунă. Вăл Донра, Кубаньре, Терек облаçĕнче белогвардеецсен юлашкийĕсене хирĕç кĕрешнĕ. Ун чухне ăна Сергей Миронович пĕр хут çеç тĕл пулман.

— Пурăнатăн, Павлуша,—тесе ыйтнă Киров.

— Пурăнатăп, Сергей Миронович.

— Çапăçатăн?

— Бандитсене пуçран та, хыçалтан та çапатăп.

Павелăн чĕри тăшмансене курайманлăхпа тулнă. Корнилов бандичĕсем унăн ашшĕне вĕлеричченех хĕненĕ, амăшне çакса вĕлернĕ. Аслă вырăс халăхĕн ывăлĕсемпе хĕрĕсем тăкнă чĕн кĕрешĕве чĕннĕ. Павел хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр çапăçнă. Çапăçура ултă хут аманнă, сурансем унăн сывлăхне хавшатнă. Урасăр, алăсăр тăрса юлнă, каласайман. Сын йăлтах пĕтнĕ темелле. Анчах унăн паттăр шухăшне нимĕн те пусарса лартма пултарайман. Тăван çĕршыв ăна санаторисенче тата курортсенче сыватнă.

Акă ĕнтĕ каллех хăрушă кунсем килсе тухрĕç. Унăн чĕри каллех ирсĕр фашистсене курайманлăхпа тулса хытă тапнă. Павел алла пăшал тытнă та, партизансен отрядне тухса кайнă. Вăл тăшман пырасса кĕтсе ларман, отряда ертсе гитлерла бандитсен тылне кĕрсе кайнă, унта çапăçма тытăннă.

Эпир ăна икĕ хут походра пулнă. хыçсăн куртăмăр. Çырма тĕпĕнче, хыр ывăççисен сулхăнне тăрса отрядăн паттăрла ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ. Тăшман артиллерийĕ вăрман çине персе тăчĕ, снарядсен ванчăкĕсем, йывăç тураттисене тата-тата пăрахса, урасем патне пырса ӳкрĕç.

Отряд тăшман çине шоссе çулĕ патĕнче тапăннă. Нумаях кĕтсе выртман. Тăшман машинисем курăннă: малта мотоциклсем, вĕсем хыçсăн—танкеткăсем, грузовой машинăсем.

Отряд пуçласа тăшмана хирĕç тĕл пулнă. Партизансем хушшинче халичен пăшал персе курман çынсем чылай пулнă. Вĕсенчен хăшпĕрисем малтанлăха шикленнĕ.

— Ачасем, ан хăрăр,—тесе хавхалантарнă Павел.

Унтан вăл сулахай фланга выртакансене колонна çине мал енчен пеме хушнă. Пени илтĕнмен.

— Мĕн пулчĕ?

— Хăрамалла, машинăсем питĕ нумай.

— Пулеметчик, мотоциклистсем çине пер!—тесе команда панă Павел. Çавăнтах пурте савăнса кайнă. Фашистла бандитсем кăшкăрнă, машинăсем çинчен сирпĕне-сирпĕне ӳкнĕ. Отряд пăшалсенчен пеме тытăлнă. Колонна чарăннă.

Каллех команда:

— Гранатăсем!

Вилĕм кучченеçĕсем машина кузовĕсем, моторсен капочĕсем çине пыра-пыра ӳкнĕ.

Тăшман салтакĕсем хăраса ӳкнĕ. Вĕсем машина çинчен анса вăрманалла тарнă, шăтăксене кĕрсе выртнă. Автоматсемпе взрывсем пулни курăннă.

Пĕр самолетсăр пуçне, пирĕн самолетсем шутне хăйсен базисене тавăрăннă. Тавăрăнман самолета шыраççĕ

Совет халăхĕн патриотла движенийĕ хăватлăн сарăлса пырать

Гитлерла бандăсем пирĕн чечекленсе пыракан социализмлă тăван çĕршыв çине уттавлăн тапăннине хирĕç совет халăхĕ патриотла движение хăватлăн сарнипе ответлерĕ. Совет Союзĕнчи ĕççыннисем тăшмана çапса аркатас ĕçре фронта, хамăран паттăр Хĕрлĕ Çара, Тинĕс-Çар Флотне пысăк пулăшаççĕ. Фронтпа тыл пĕр пек. Хĕрлĕ Çăран боецĕсем тăшмана фронта отпор параççĕ пулсан, тылри ĕççыннисем производствăра ударлă ĕçлесе гитлерла вăрă-хураханĕсене пĕтерсе тăкма вăй хатĕрлеççĕ.

Совет халăхĕн патриотла движенине кăтартакан нумай тĕслĕхсенчен пĕри вăл — совет ĕççыннийĕсем çĕршыв оборонин халăх фондне тăвас ĕçе активлăн хутшăнни пулать. Çĕршыв оборонин фондне тăвас патриотла движени пуçланнăранпа Совет Союзĕнчи ĕççыннисем çак фонда миллиард тенкĕ ытла укçа, темиçе миллион тенкĕлĕх заем облигацийĕсем, хаклă япаласем, ылттăн, кĕмĕл пачĕç. Государство банкĕн учрежденийĕсене çĕршыв оборонин фончĕ валли укçа-тенкĕ тата ытти япаласем парасси кунран-кун вăйланса пырать.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем те социализмлă тăван çĕршывăн оборонин фондне тăвас ĕçе питĕ активлăн хутшăнаççĕ. Парти, комсомол, профсоюз организацийĕсем тата советсем ертсе пынипе предприятисенче, колхозсенче, учрежденисенче çĕршыв оборонин фондне тăвас ĕç пĕтĕм халăхăн ĕçĕ пулса тăчĕ. Государство банкĕн учрежденийĕсем пинă сведенисем акă мĕн çинчен каласçĕ. Сентябрĕн 1-мĕш тĕлне Чăваш республикинчи ĕççыннисем çĕршыв оборонин фондне 833.000 тенкĕ укçа, 1.760.000 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем, аш-какай 127 центнер, сĕт 33.600 литр, пахча-çимĕçсем 900 килограмм, пыл 700 килограмм, çăм 752 килограмм, тырă 93 тонна панă. Кунсăр пуçне, воскресниксенче ĕçлесе илнĕ укçана ĕççыннисем 100 пин тенкĕ ытла панă.

Партипе комсомол, профсоюз организацийĕсем тата советсем ĕççыннисен çак чаплă пуçаруне организацилесе ертсе пынă çĕрте оборона фондне укçа-тенкĕ хывасси лайăх пулса пырать. Çакна нумай тĕслĕхсем кăтартса параççĕ. ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕ, Канаш, Çĕрпӳ, Çĕмĕрле тата Улатăр райкомĕсем çĕршыв оборонин фондне тăвас движени пуçлансанах çак ĕçе организацилесе ертсе пырассине хăйсем çине илчĕç. Вĕсем ку ыйтăва райком бюровĕсен ларăвĕсенче сӳтсе-явăрçĕç, пуçламĕш парторганизацисене çийĕнчех тивĕçлĕ кăтартусем пачĕç. Çапла вара халăх хăй тĕллĕн пуçарнă ĕçе организациллĕ çул çине тăратрĕç. Ку вăл хăйăн лайăх результатне пачĕ. Çĕршыв оборонин фондне шухăнă шутран Шупашкар хулинчи ĕççыннисем 206 пин тенкĕ укçа, 200 пин тенкĕлĕх заем облигацийĕсем, Канаш районĕнчи ĕççыннисем 118.000 тенкĕ укçа, 300.000 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем панă. Çĕрпӳ, Улатăр, Çĕмĕрле районĕсенчи ĕççыннисем те тăван çĕршывăн оборона фондне тăвас тĕлĕшпе примерлă ĕçлеççĕ. Çĕрпӳ районĕнчи ĕççыннисем оборона фондне 53.000 тенкĕ укçа, Улатăр районĕнчи ĕççыннисем 45.000 тенкĕ панă та ĕнтĕ.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Тарапай ялсовенте кĕрекен колхозсенче оборона фончĕ тăвас ыйтăва ятарласа колхозниксен пухăвĕсенче сӳтсе-явнă. Большевикла агитаторсем çĕршыв оборонин хăватлă фондне тăвасси совет халăхĕн государствăллă. ĕçĕ пулса тăни çинчен тĕплĕн каласа ăнлантарнă. Колхозниксем пурте пĕр çын пек пуласа, кашни уйăхрах пĕрер ĕçкунĕ çинĕ тивекен тупăша оборна фондне пама йышăннă. Çакна колхозниксем сахал тесе шутланă, 1—2 кун хушшинче 5 пин тенкĕ укçа пухса оборна фондĕнĕ панă.

Елчĕк районĕнчи «Хунав» колхоз членĕсем оборона фондне 35 центнер тырă леçсе панă. Оборона фондне тăвас ыйтăва сӳтсе-явма пухăннă пухура колхозник-патриот А. И. Тихонов юлташ сăмах тухса калланă. Вăл пĕтĕм колхозниксем умĕнче хăй халиччен перекет кассинче усранă 1000 тенкĕ укçине çĕршыв оборонин фондне панă. Совет патриочĕсен çакăн пек мухтавлă ĕçĕсем кашни районра, кашни предприятире, кашни колхозра пур. Ку вăл пирĕн республикăри ĕççыннисем тăван çĕршыва сыхлас, фронта пулăшас тĕлĕшпе хавхаланса ĕçленине кăтартса парать.

Анчах та ВКП(б) хăшпĕр райкомĕсем, пуçламĕш парторганизацисем, комсомол тата профсоюз организацийĕсем ĕççыннисен çак пуçаруне тивĕçлипе ертсе пымаççĕ-ха. Советски, Красноармейски, Шупашкар тата ытти хăшпĕр районсенче çĕршыв оборонин фондне тăвас тĕлĕшпе ĕççыннисем пуçарнине çитĕлĕксĕр ертсе пынă пирки ĕнтĕ, колхозниксем хăйсем парас тенĕ укçана, тырпула параймаççĕ. Мĕншĕн тесен, партипе комсомол организацийĕсем тата советсен исполкомĕсем ĕççыннисем хушшинче массăллă агитаци ĕçне çитĕлĕксĕр туса пыраççĕ. «Правда» хаçат çĕршыв оборонин фондне тăвас ĕçе ĕççыннисем хăйсем тĕллĕн пуçарчĕç пулсан, ăна партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсен организациллĕ çул çине тăратса ертсе пымалла, тесе кăтартса панине асăннă районсенче тĕплĕн ăнланса илмен-ха.

Малта пыракан уйăм рабочисемпе работницăсем тата колхозниксемпе колхозницăсем пуçарнă ĕç мĕнпур совет халăхĕн мухтавлă ĕçĕ пулса тăчĕ. Çĕршыв оборонин халăх фондне тăвассине ĕççыннисем государствăллă пысăк ĕç тесе шутлаççĕ. Партипе комсомол, профсоюз организацийĕсен задачи — совет халăхĕн çак чаплă движенине ертсе пырасси, ăна малашне татах та вăйлăрах аталантарса пырасси пулать. Сталин юлташ хамăран мĕнпур вăйсене, ресурссене гитлерла Германие çĕмĕрсе тăкма мобилизацилеме чĕннине ĕççыннисем пысăк хаваслăхпа йышăнчĕç, тăван çĕршыв оборонин хăватлă фондне тума хĕрӳллĕн тытăнчĕç. Халăх хăй тунă оборона фончĕ юнлă гитлеризма пĕтерсе тăкассине хăвăртлатать.

Налогсем тӳлеççĕ

ИШЛЕЙ. Шетмĕпуç ялсоветне кĕрекен «Восток» колхоз членĕ Мария Матвеева 1941 çулти ялхуçалăх налогĕпе страховка укçисене пĕтĕмпех тӳлесе татрĕ. Çавăн пекех «Çĕнĕ хунав» колхоз членĕсем Д. Ильин, Н. Романов, А. Осипов тата ыт. юлташсем те 1941 çулти ялхуçалăх налогĕпе страховка укçисене тӳлесе татрĕç.

Ф. ТУРХАНКАЙ.
М. КЛЮЧНИКОВ.

Оборона фондне

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Районри ĕççыннисен патриотла движенийĕ анлăн сарăлса пырать. «Ударник» колхозри колхозниксем оборона фончĕ валли 1 гектар çинчи тырра, 16 килограмм çу уйăрса леçсе пачĕç. «Восход» тата «Ленинская победа» колхозсем 2-шер гектар çинчи тырра вырса леçсе пама пулчĕç. Тугайри Чапаев ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем оборона фончĕ валли 3 гектар тырă уйăрчĕç тата 2 ĕçкунне тивекен тырпула оборонăна тĕреклетнĕ çĕре пама пулчĕç. Районри служащисемпе рабочисем заем облигацийĕсене оборона фондне параççĕ. Андреев тата Воронова учительница 4.750 тенкĕ оборона фондне хывнĕç. Çак кунсенче ВКП(б) райкомĕнче ĕçлекен юлташсем заем облигацийĕсене оборона фондне пачĕç.

А. ПЕРЕПЕЛКИН.
ВКП(б) райкомĕн пропагандисчĕ.

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Пашъелĕнчи «Комсомол» колхоз членĕсем оборна фондне 600 ĕçкунĕ çине тивекен тупăша пама йышăннă.

А. ТУКМАКОВ.

СОВЕТСКОЕ. «Волна революции» колхоз çĕршыв оборонин фондне 1570 килограмм, «Восход» колхоз пĕр тонна, «Смычка» колхоз 500 килограмм тырă панă. «Чекист» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем 13 килограмм çăм, 200 штука çăмарта панă.

В. АНДРЕЕВ.

ЭЛĔК. Çĕршыв оборонин фондне тума «Коммунар» колхоз членĕсем 30 пăт ыраш, 300 штука çăмарта панă.

В. КАРПОВ.

Çĕрпӳри педагогика училищинчи преподавательсемпе служащисем тăван çĕршыв оборонине тĕреклетме заем облигацисене параççĕ. Техничка В. Алексеева юлташ 150 тенкĕлĕх, Е. Исаевăпа М. Танлэ преподавательницăсем 1.500-шер тенкĕлĕх пачĕç.

Училище коллективĕ тăван çĕршыв оборонине тĕреклетме 20 пин тенкĕлĕх заем облигацисене пухса панă.

П. ШООР.

Телейлĕ пурнăç çирĕп алăра

Çăмăл автомашина ял хăшки умне çитсе чарăнчĕ. Ăçтан тата хамсем ларса килнĕ-ха автомашинăпа? Мĕн ĕçпе тата кам патне килнĕ? Документсем пур-и? Тĕплĕн ыйтса пĕлнĕ хыççăн колхозница хăпхана уçса, автомашинăна яла кĕме ирĕк панă.

Кăмăллă çынсем пурăнаççĕ Чăкаçри «Комсомол» колхозра. Кирек тăхăмпа та кăмăллăн калаçаççĕ, никама та сивĕ сăмах хăлаçа кӳрентермеççĕ. Анчах тимĕррисем çук кунта. Кашниех сисĕмлĕ пулма тăрăшать... Эсир яла малтанхи хут пырса кĕтĕр пулсан, сирĕн дежурнăя хăвăр кам иккенне каласа памалла. Ыйтаççĕ пулсан, документ кăтартмалла. Ахалĕн сире, паллă мар çынна, ялсовет е колхоз правлени канцелярине илсе каяççĕ.

Колхозниксем хăйсен телейлĕ пурнăçне тимлĕн сыхлаççĕ. Урамсенче, колхозри выльăх-чĕрлĕх фермисемпе тырă склачĕсем патĕнче, уйра итем çинче кăнтăрла та, çĕрле те хуралçăсем тăнине курма пулать. Колхозниксем каçсерен чугунçулне хуралламалла тухаççĕ. Телеграф-телефон линисене те тимлĕн сыхлаççĕ, пурте хамăран пурлăх — пурне те хамăран сыхламалла.

Кашни завода, фабрикăна, колхоза оборона крепоçĕ туса хума чĕнет пирĕн парти. Çакна колхозниксем тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Халичен пулман пысăк хастарлăхпа ĕçлесе, колхозăн пуянлăхне татах та темиçе хут пысăклатаççĕ. Çĕршыври хĕçпăшаллă вăйсен хăвачĕ ытларах ӳстĕр. Хĕрлĕ Çар фашистла йыткĕтĕвĕсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкăр! Пурте фронт валли! Пурте тăшмана çĕнтерме! Çĕнтерӳ тума мĕн кирлине пĕтĕмпех пама хатĕр колхозниксем. Сергейпа Михаил Павловсем фронтра тăшмана хирĕç çапăçаççĕ. Вĕсен 51 çула çитнĕ амăшĕ — Акулина Егорова оборона фондне 50 тенкĕлĕх облигаци хывнă. — Хĕрлĕ Çар тăшмана хăвăртрах çĕнтертĕр,—тет вăл. Колхозница Анастасия Филиппова 50 тенкĕлĕх облигаци, 10 литр сĕт оборона фондне пама пуллă. Колхозниксенчен чылайăшĕ вăрçă пĕтиччен кашни уйăхрах пĕр ĕçкунĕ çине тивекен тупăша оборона фондне парса тăма пулаççĕ. Колхоз председателĕ Гаврилов юлташ 30 ĕçкунĕ çине тивекен тупăш чухлĕ хывма пулнă.

Колхозри комсомолецсем пур ĕçе те активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем кашни каç тенĕ пек хуралçăсем тăракан постсенче пулаççĕ. Социализмлă пурлăха лайăхрах сыхлама пулăшаççĕ. Тăван çĕршыв оборонин фондне укçа-тенкĕ, облигаци, тырпул хывас ĕçе комсомолецсем чи малтан хутшăннă. Комсомолра тăман çамрăксемпе пĕрле 900 килограмм тимĕр-тăмăр пухнă, укçи-тенкине пĕтĕмпех оборона фондне панă. Комсомол комитечĕн секретарĕ А. Яковлев çак облигацийĕсене 100 тенкĕлĕх, П. Краснов — 100, комсомолец-учитель Никитин — 200, М. Егорова — 50 тенкĕлĕх, комсомолецсем пурĕ 550 тенкĕлĕх облигаци тата 5-шер ĕçкунĕ пуçне тивекен тупăша оборона фондне параççĕ.

Виççĕмĕш бригадăн бригадирĕ пулнă И. Степанов юлташ фронта кайнă. Халĕ унăн вырăнĕнче комсомолка Варвара Андреева ĕçлет. Комсомолка хăйне шанса панă ĕçе тивĕçлипе туса пырать. 3-мĕш бригада ыраша нихăш бригадăран та маларах вырса пĕтернĕ. Ку бригадири колхозниксем ытти бригадăсене пулăшма кайнă.

Тырă вырнă çĕрте комсомолецсем организацилеменĕ звено ĕçлет. Ялсовет, колхоз правлени канцелярийĕнче ĕçлекенсем заняти пĕтнĕ хыççăн тырă вырма уя тухаççĕ. Августăн 19-мĕшĕнче колхоз çĕрĕпех авăн çапрĕ. Авăн çапма комсомолецсен звени те тухрĕ.

Колхозниксем Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернисемпе, Хĕрлĕ Çар боецĕсен геройла ĕçсемпе интересленеççĕ. Çаксем çинчен вĕсене комсомолец-агитаторсем Ахазова, Михайлов, Паратина юлташсем яланах ăнлантарса параççĕ.

Чечекленсе пырать колхозри пурнăç. Колхозниксем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, хăйсен лайăх пурнăçне татах та лайăхлатаççĕ.

Т. МАЙОРОВ.
Канаш.

Стахановецсен мухтавлă ĕçĕсем

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри рабочисемпе работницăсем хушшинче производствăллă çĕкленӳ куллен кун ӳссе пырать. Малтанхи уйăхсенче ĕç нормине тултарса ĕçленĕ рабочисемпе работницăсем вăхăтра 2—3 норма тăваççĕ. Тимĕрçи цехĕнчи прессовщик Г. Самылин юлташ ĕç нормине 225 процент, тимĕрçи Корнейчук юлташ 394 процент, А. Галкин юлташ 380 процент тултараççĕ. Юлашки вăхăтра темиçе станок çинче ĕçлесси тата нумай тĕрлĕ профессисене вĕренесси сарăлса пыма пуçларĕ. «За трудовое отличие» медаль илнĕ И. Осипов юлташ икĕ фрезернăй станок çинче ĕçлесе, сменăра 3—4 норма тултарса пырать. Август уйăхĕнче заданине вăл 350 процент тултарнă. Шлифовщик Игнатьев юлташ чылай станоксене вĕреннĕ. Хальхи вăхăтра вăл яланах икĕ станок çинче ĕçлесе, кулленех нормăна 300—400 процентран кая мар тултарать. Термист Моряков июль уйăхĕнчи заданине 567 процент тултарнă. Цехсенче двухсотниксемпе трехсотниксен йышĕ ӳссе пырать. Ваттисем те, çамрăккисем те — пурте пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Ватă производственниксем парти членĕ Федин тата Дементьев юлташсем çамрăк рабочисене нумай пулăшаççĕ. Тимĕрçи цехĕнчи çамрăк рабочисемпе работницăсенчен чылайăшĕ вĕсем пулăшса пынипе лайăх ĕçлеме вĕреннĕ. Стахановка-нагревальщица Д. Александрова нормăна 300 процент ытла тултарнă. Стахановецсем ĕç тухăçлăхне пĕрмаях ӳстерсе пыма, таврăн хăйне ларакан хакне йӳнетме, государство укçи-тенкине ытларах перекетлеме тăрăшаççĕ. Тимĕрçи Владимир Ведь хăй ĕçлекен станокăн припособленине лайăхлатнă. Çакă ĕç тухăçлăхне 2—3 хут ӳстерме май парать. Производствăри рационализаторсем шутне Кириленко, мастер И. Мрачковский тата ытти чылай юлташсем кĕреççĕ.

Производствăри ĕçе лайăхлатас тата çăмăллатас тĕлĕшпе вăл сахал мар паха сĕнӳсем панă. Нумаях та пулмасть пĕр прибор шутласа кăларнă. Çак прибор ĕç тухăçлăхне 12 хут ӳстерме май парать.

(Хамăр корр.).

Сменăра икшер норма тултараççĕ

ВĂРНАР. «Труд» артельри рабочисемпе работницăсем производствăра пысăк çĕкленӳпе ĕçлесе ĕç нормисене 200-шер процент тултараççĕ. Колеснăй цехри стахановецсем И. Матлякин, Ф. Матлякин тата ытти юлташсем те кулленех нормăна 200 процент тултарса ĕçлеççĕ. С. Матлякин юлташ мирлĕ вăхăтра ĕç нормине 120 процент тултарса ĕçленĕ пулсан, халĕ отечественнăй вăрçă кунĕсенче вăл хăйĕн ĕç нормине кулленех 210 процен тултарса пырать. Артельре ПВХО, ГСО кружокĕсенче вĕренессине те лайăх организациленĕ. Кружоксенче занятисем йĕркеллĕ пулса пыраççĕ. Артель директорĕ Лепелкин юлташ рабочисемпе работницăсене кашни кунах ирхине ĕç пуçланиччен Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернине, Хĕрлĕ Çăран вăрçăри паттăрлăхĕсем çинчен çырнă эпизодсене вуласа парать. Кунсăр пуçне Лепелкин юлташ производствăллă çĕкленӳве вăйлатса пырасси çинчен рабочисемпе час-часах калаçусем туса иртторет.

ВАНИН.



Чăваç колхозĕнчи (Канаш р.) комсомолецсем çĕршыв оборонине тĕреклетме пулăшаççĕ. Комсомолец-учитель Г. Н. Никитин çĕршыв оборонин фондне пĕр кунхи ĕç укçи, 200 тенкĕлĕх заем облигацийĕ тата 5 ĕçкунĕ панă, комсомол организацин секретарĕ А. Яковлев пĕр кунхи ĕç укçи, 100 тенкĕлĕх заем облигацийĕ тата 10 ĕçкунĕ, комсомол П. Г Краснов 100 тенкĕлĕх облигаци, 15 ĕçкунĕ тата пĕр кунхи ĕç укçи, комсомолка М. Е. Егорова 50 тенкĕлĕх облигаци, пĕр кунхи ĕç укçи тата 5 ĕçкунĕ, комсомолец избач С. М. Михайлов 50 тенкĕлĕх облигаци, 5 ĕçкунĕ тата пĕр кунхи ĕç укçи, колхоз председателĕ комсомолец Гаврялов 30 ĕçкунĕ тата 50 тенкĕлĕх облигаци, колхозник Г. Е. Елисеев 10 ĕçкунĕ тата облигаци панă. **Умерчĕк çинче**. (сулахайран сылтăмалла): Никитин, Яковлев, Краснов, Егорова, Михайлов, Гаврилов тата Елисеев юлташсем.

Е. Цыганов фотоӳкерчĕкĕ.

ГИТЛЕР ÇАРĔН САН-САПАЧĔ

Фашистсем кĕвелтухăрĕнчи фронтра тискер-кайăкла юнлă ĕçсем туни çинчен каласа кăтартакан манăн статьяна хирĕç, Берлинри радио пĕтĕм тĕнче илтĕнмелле эпĕ нимĕн намăса пĕлмесĕр суятăп тесе, хамăн юнланнă пропа эпĕ Германи салтакĕсем нимрен те хăрушлăхар ĕçсем туни çинчен пĕлтеретĕп тесе, юлашкинчен тата намăсланса хĕрелмесĕрех Хĕрлĕ Çар этемĕн чăн-чăн чыслăхĕпе тивĕçлĕхĕпĕн кĕрешет тесе калатăп, тесе пĕлтерчĕ. Геббельс эфирта ман çинчен, совет писательĕ çинчен кӳренторекен сăмахсем сарчĕ, вăл мана ирĕксĕрех çапла ответ партарать: суя!—тени пирĕншĕн, совет писателĕсемшĕн, кӳренторекен чи хăрушă сăмах пулса тăрать. Пирĕн пĕтĕм искусство, унăн пĕтĕм пафосĕ моралле пысăк ĕçсем туса çирĕплетес йĕрпе пырать. Çакна тума пирĕнтен хăйсен алăсемпе пирĕн çĕнĕ совет тĕнчин материаллă тата духовнăй формисене туса пыракан 50 миллион совет вулаканĕсем хыттăн ыйтаççĕ. Халăх пĕр-пĕр писателе, вăл суять тесе, шанма пăрахни—вăл çак писателе халăх сивлени, литературăран, социаллă пурнăçран хăваласа кăларни пулса тăрать.

Эпир, совет писателĕсемпе гражданĕсем тата пирĕн Хĕрлĕ Çар чăнлăхшăн кĕрешетпĕр. Этем чыслăхĕпе тивĕçлĕхĕ—çав чăнлăхăн ячĕ. Çавăн ячĕпе эпĕ пĕтĕм тĕнчене илтĕнмелле калатăп, фашизма хирĕç кĕрешекен ирĕклĕ çĕршывсен граждайĕсемпе воинĕсене пурне те, пурне те, пурне те, тата Германи халăхне те çапла калатăп эпĕ: нимĕç салтакĕсемпе фашистсен эхуланнăй отрячĕсем ăспа çавăрса илмелле мар хăрушă тискерлăхсем тăваççĕ, çавăнпа та—Геббельс тĕрĕс калать — манăн чĕнмел юнпа тулса ларать. Маншăн шуйттанăнни пек хаяр фантази пулсан та, нимĕçсен фашистла йыткĕтĕвĕсем пырса кĕнĕ Украина, Белоруссии, Великоросси облаçĕсенче куллен пулса пыракан асаплантарусен, вилĕмле кăшкăрусен, çăткăнла тискер мăшкăлсен тискертен те тискер йĕркисене эпĕ шухăшласа кăларма пултарас çук.

Пĕтĕм Германи нацийĕ умне халĕ хаяр ыйту кăларса тăратнă: çакăн пек чапа тухнипе вăл ним протестлемесĕрех пурăнма пултараять-и, çук-и?

Эпĕ свидетельсен кĕске те тĕрĕс калавĕсене илсе кăтартатăп: вăл свидетельсем чĕрĕ-ха, вĕсем е Хĕрлĕ Çарта е лазаретсенче, вĕсене тĕпчесе тĕрĕслекен пĕтĕм тĕнчери комисси,—ун пек комисси тăвас пулсан,—кирек хăш сехетре те тĕпчесе пĕлме пултараять.

«Эпĕ Белосток çывăхĕнчи пĕр ял хĕрринче шĕвĕртнĕ 5 шалча çуртăм. Вĕсем çине 5 хĕрарăмăн виллисене тăрăнтарса хунă. Вилесем çарамас, вĕсен хырăмĕсене касса çурнă, кăкăрĕсене касса пăрахнă, пуçĕсене татнă. Хĕрарăмсен пуçĕсем юн кӳллисем йăшăнче, хăйсен ачисен виллисемпе пĕрле йăваланса выртаççĕ. Вĕсем пирĕн командирсен арăмĕсемпе ачисем пулнă». (Кĕçĕн воентехник С. И. Дадашев).

«Пинщинăри, вăрман çывăхĕнчи уçланкăра, эпĕ 15 çулхи хĕр-кĕтӳçĕн суранласа пĕтернĕ виллине куртăм. Ăна 7 нимĕç салтакĕсем пусмăрланă пулнă, унтан кăкăрне штыкпа чиксе пĕторсе, хырăмне çурса хăварнă». (Вăлах).

«Германи войскисем кĕрсе тухнă пур ялсемпе саласенче те эпĕ ачасем, хĕрарăмсен тата стариксен виллисене куртăм». (Вăлах).

«Разведчиксен группипе Студеное ялĕ патнелле пынă чух, эпир хăрушла тискеррĕн кăшкăрнине илтрĕмĕр. Унта фашистсен салтакĕсем красноармеецăн çуртне вут тивретсе, вут ăшне унăн арăмĕпе ачисене пăрахнă мĕн...» (Бат. комиссар Л. Бейлинсон).

«Остров хулине фашистсен танкĕсем пырса кĕчĕç. Нимĕçсем вунтшар хĕрарăмсемпе ачасене пахчана хăваласа тухрĕç те, кĕтмен çĕртенех вĕсене автоматсенчен персе вĕлерме тытăнчĕç. Унтан çавăнтах тата 25 хĕрарăма яхăн илсе пычĕç те, вĕсене те персе пăрахрĕç. Çаксене пĕтĕмпех эпĕ хамăн куçпах, çав пахча çывăхĕнче пысанса выртнă чух куртăм». (Политрук Чеботарев).

«Бронислава ялĕнче нимĕçсем амăшĕсен куçĕ умĕнчех виçĕ пĕчĕк ачана чĕррĕнех çĕр айне алтса чикнă, унтан çав хĕрарăмсене те персе вĕлернĕ». (Фронт политуправленийĕн пĕлтерĕвĕ).

«Фрунзе ячĕпе тăракан колхозра нимĕçсем çамрăк хĕрарăма, колхоз председательницине пусмăрланă, унăн сулахай хăкăрне касса илнĕ тата икĕ çĕртен çĕçĕпе чикнĕ...» (Кĕрĕн сержант Агафонов).

«Шалти разведкăна кайсан, Пропойск хули çывăхĕнчи пĕр ялта эпĕ нимĕçсем подвалтан пĕр старике, арçын ачана тата пĕчĕк хĕрачана илсе тухнине куртăм. Вĕсене, тем çинчен ыйтрĕç те, хĕнеме пуçларĕç. Унтан çывăхранах персе старике вĕлерчĕç. Кăшкăрса янă хĕрачана штыкпа çĕклесе аяккалла ывăтрĕç. Вĕсем арçын ачана çакăн çине пĕтĕмпех пăхтарса тăратрĕç, кайран ăна та вĕлерчĕç». (Взвод командирĕн помощникĕ С. Г. Пляшечный).

«Пирĕн пата нимĕçсем çĕмĕрсе пырса кĕчĕç. 16-шар çулхи икĕ хĕрачана вĕсен офицерĕсем масар çине сĕтĕрсе кĕртсе мăшкăлларĕç. Унтан хăйсен салтакĕсене çав хĕрачассене йывăçсем çине çакма хушрĕç. Салтаксем приказа пурнăçласа вĕсене кутăн çакрĕç. Çавăнтах салтаксем чылай вата 9 хĕрарăма мăшкăлларĕç». («Пахарь» колхозри колхозница Петрова).

Çапла ĕнтĕ, Гитлер Эврăпара тата пĕтĕм тĕнчере «çĕнĕ йĕрке» тума вĕрентесе хатĕрленĕ Германи çарĕ—çакă хырăмсене касса арпаштаракан хальхи джексем—хăйсен танкĕсен йĕрпе фашистла культурăн ханăхăвĕсене илсе пыраççĕ. Вĕсем Германие, хăйсен савнă хĕрĕсем патне, сентименталлă открыткăсемпе пĕрле хăйсем çаратнă çуртсемпе магазинсенчен тумтир, атă-пушмак, çимеллисем ăсатаççĕ (вăрăхурахла хăтланса çаратнă фактсем пирки темиçе çĕр протокол çырнă), унтан, эрех кӳпсе тултарса, хĕрарăмсене чĕрĕнех касса, ачасене чиксе пăрахса, фашистла ашкăнаççĕ.

Хăй калама çук пысăк çухатусем туни пирки урса кайса—вăл çухатусене текех пытарса тăма çук ĕнтĕ, тата вĕсене тултарма та йывăрлансах пырать,—тĕнчери вăрçăра юлашкинчен пур-пĕрех парăнмалла пулассине тĕксĕмĕн, ĕçкĕпе юн сĕрмĕ витĕр тавçăрса, нимĕçсен çарĕ хăйне намăсла витет: вăл тыткăнрисене асаплантарать, вĕсене вĕлерет. Подлец ятлех ил ĕнтĕ, Германин гитлерла çарĕ! Акă фактсем:

«Мана, Великие Луки ялăн хуларан хĕвеланăç еннерех аманса тыткăна лекнĕскере, нимĕçсем тыткăнри 13 красноармеец тата пĕр капитан ларакан кĕлете хупрĕç. Пĕр 10 минутăран пире пурне те кĕлетрен илсе тухса, пĕр рете тăратрĕç. Унтан нимĕç салтакĕ стройран капитанпа икĕ красноармееца кăларчĕ. Строй умĕнче нимĕç салтакĕсем капитана çывăхранах пеме тытăнчĕç, унăн сылтăм аллине, унтан сулахайне персе шăтарчĕç, кайран сулахай урине сылтăм урине персе шăтарчĕç. Капитан ӳксен, нимĕç салтакĕсенчен пĕри пĕшкĕнчĕ те, çĕçĕпе унăн сăмсине, унтан хăлхисене касса илтĕ, кайран çĕçĕ вĕçĕпе куçĕсене чиксе шăтарчĕ. Капитанăн кĕлетки чĕтренсе выртрĕ. Вара тепĕр салтакĕ ăна кăкăринчен персе вĕлерчĕ.

Икĕ красноармееца та нимĕç салтакĕсем çавнашкалах турĕç. Нимĕçсем пуçне ӳсĕрчĕç.

Малтанхисене вĕлернĕ хыççăн пире, чĕррĕн юлнисене, шăтăк алтса тыткăнрисене пытарма хушрĕç те, хамăра каллех кĕлете хăваласа кӳртрĕç. Вирĕн кун пире шыв та, çăкăр та памарĕç. Сĕрле эпир çĕр чавса тухрăмăр та, тартăмăр». (Красноармеец Д. Е. Быстраков).

«Пахарь» колхоз патĕнче эпир Гофман красноармеецăн виллине тупрăмăр. Унăнне икĕ аллине те касса татнă, куçĕсене чиксе шăтарнă, чĕлхине касса илнĕ. Унăн виллипе юнашар хăйĕн каска татнă аллисенчен 5 вĕçлĕ çăлтăр туса хунă». (Колхозница Петрова).

«Эпĕ Охотичи ялĕнче асаплантарса вĕлернĕ Хĕрлĕ Çăран икĕ командирăн виллисене куртăм. Хресченсем çапла каласа кăтартрĕç: çак ялта тăнă нимĕçсем çав лейтенантсене тыткăна илнĕ. Вĕсене çарамассипе хушнă та, допрос тăвакансем вара мĕн алла лекнĕ—çавăнпа çапнă, штыксемпе чиксе, унтан пусса пăрахнă. Вĕсен ӳчĕсем çинче штыкпа чикнĕ йĕрсем пуман

Çакăнтах Быховăра, площадьре йĕплĕ пралукран 4 клетка тунă. Вĕсен ăшне кашнинех 200-шер çын тарав аманнă красноармеецсене, Хĕрлĕ Çар командирĕсене тата çар çынни марриссене—советпа парти работникĕсене хупса хунă, вĕсен хушшинче 15—16 çулхи комсомолецсем нумай пулнă.

Нимĕçсем çак клеткăсене хупнисене апат çитермен, типсе вилес патне çитнĕ çынсене тăвата ура çине тăрса çĕмĕ кулленех валаклă çине кăштах шыв ярса панă, тата клеткăна темиçе çĕрулми ывăтканă. Эпĕ хамах фашистсен салтакĕ халь çеç сĕвсе илнĕ така тирне клеткăна пăрахса панине куртăм. Тыткăна лекнисен çав тире кышларĕç. Çын пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçма тăрсан, нимĕç часовойĕсем ăна перессĕç. Çак мĕскĕн çынсене кайран мĕн пулнине пĕлместĕп, мана тарма май килчĕ». (Çар юрисчĕ М. М. Капустянский).

«Пирĕн подразделенин нимĕçсене Я. ялĕнчен хăваласа кăларчĕ. Пĕр çуртăн килхушшинче эпир вĕлернĕ 7 красноармееца тупрăмăр. Пурнине те урисене тытнă. Пĕринне хырăмне касса çурнă. Ку ĕçе нимĕçсем ялтан тухса тарас умĕн тусем хăваланă». (Пулеметчик Петр Фанарькин).

Ситет! Хĕрлĕ Çарăн тытăна лекнĕ, пуринчен ытла аманнипе тытăна лекнĕ воинĕсене мĕнле асаплантарса мăшкăлланисен списокĕ литĕ пысăк. Çаксем вĕсем пĕрĕрĕн пулнă хурлăхлă фактсем мар, ку вăл Германи çарĕнчи воспитани системи. Нимĕç салтакне çын пулма пăрахтарса, унăн, автомат пулса тăраканскерĕн, тĕттĕм те усал туртăмĕсене ирĕх параççĕ: распутник пулмалласкер — пусмăрла, асаплантаракан пулмалласкер — асаплантар, вилĕм умĕнхи кăшкăрусене итлесе киллен, сăмса шăтăкĕсене çар, вăрă пулмалласкер—вăрла, теççĕ. Çакăншăн, кирлĕ чух, эсĕ, нимĕç салтакĕ, Гитлерăн психопатла мăнаçлăхĕшĕн, çĕр чăмăрĕ çинчи ултă материка та малтанах пĕр-пĕрин хушшинче валеçсе хунă Герингпа ытти сволочьсен ушкăнĕсемшĕн вилĕн.

Тĕнчери пур çĕршывсенчи, çав шутрах мĕскĕн Германири çĕршер миллион тӳрĕ те таса чĕреллĕ çынсем—пурте—пирĕн илемлĕ те паха пурнăçри юнлă та хăрушă ашкăнăва пĕтерме тăрăр! Германин гитлерла çарне пĕтерсе хумаллах. Германи фашизмне—çынсене вĕлерекенсем тата вĕлерме тивĕçлисем çине суйласа пайлакан çак тискер системăна—ним юлмиччен, тымарĕпех çулăрсе ямалла.

АЛЕКСЕЙ ТОЛСТОЙ.

Англипе Совет Союзĕн Иранри командованийĕн представителĕсем туслăн тĕлпулни

ТЕГЕРАН, сентябрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Казвинра Англин тата Совет Союзĕн Иранри войскисен представителĕсем тĕлпулнă. Англи войскисенчен Хамаданран Англин Иранри бронетанковăй войскисен командующийĕ бригаднăй генерал Эмденбург пынă, унпа пĕрле Англи офицерĕсен группи пулнă.

Англи командованийĕн представителĕсем килнĕ ятпа совет войскисен танковăй соединенин командирĕ полковник Синенко тата полковой комиссар Шухардин юлташсем каçхи апат панă. Туслă обстановкăра Англи тата Совет Союз войскисен командовани представителĕсем пĕр-пĕрине саламланă тата Германи фашизмне хирĕç кĕрешекен икĕ аслă халăхăн туслăхне пур майпа та çирĕплетсе пыма кирли çинчен сĕнӳсем тухса каланă. Калаçуран, Англи войскисем Хамадана тата Семендеджина çитни, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем—Казвина çитни паллă пулнă. Туслă çар чаçĕсен командованин представителĕсем распоряжени иличчен хăйсем çитсе чарăннă çĕрте çирĕпленсе вырнаçма йышăннă. Бригаднăй генерал Эмденбург совет войскисен командованине Англи войскисем патне пырса курма чĕннĕ. Совет войскисен командованийĕ çав чĕнĕве йышăннă.

Англи тата Америка хаçачĕсен корреспонденчĕсем Хĕрлĕ Çарăн Казвинра вырнаçнă чаçĕсем патĕнче пулса курнă. (ТАСС).

Англи авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Официаллă йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: сентябрĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Берлин çине пырса тапăннă çĕре тăватă моторлă çĕнĕ бомбардировщиксем тата йывăр бомбовозсем хутшăннă. Летчиксем пысăк бомбăсем пăрахнине пула вăйлă взрывсем тата Германи столицин главнăй вокзалĕсенчен пĕринче вăйл пушарсем тухнине уйрăмăнах палăртнă. Бомбăсенчен чылайĕшĕ промышленноçлă районра ӳксе çурăлнă. Германи истребителĕсем вăйсăррăн хирĕç тăнă.

Иртнĕ çĕрле Англи самолечĕсем Брестри доксем çине бомбăсем пăрахнă.

Сентябрĕн 4-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Германи авиацийĕ çурçĕр-хĕвелтухăç Англири чылай пунктсем çине бомбăсем пăрахнă. Жертвăсем çук. Сиен кӳни пысăк мар.

Вăтаçĕр тинĕç бассейнĕнче Англия йывăр бомбардировщикĕсем сентябрĕн 2-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Триполи çине пырса тапăннă. Электроцентраль çине бомбăсем пăрахнине пула темиçе вырăнта пушарсем тухнă. Тепĕр эскадрилья Бенгази портĕнче тăракан суднăсем çине бомбăсем пăрахнă.

Тинĕс-çар флочĕн авиацийĕ Жербани Конизори (Сицилия) аэродромсем çинче ларакан самолетсем çине бомбăсем пăрахнă.

Бенгази районĕнче Англин подводнăй лодки икĕ пысăк шхунăна шыва путарнă. Сицилирен çурçĕр-хĕвеланăç енче противникăн судносем çине тапăннă, вĕсенчен пĕрне путарнă тесе шутлаççĕ.

Сентябрĕн 1-мĕшĕнче противник авиацийĕ Тобрукри гарнизон çине пырса тапăннă. Анчах чылай бомбăсем противникăн хăйĕн позицийĕсем çинех ӳкнĕ. Порт районĕнче нимĕнле сиен те пулман.

Иртнĕ çĕрле противник самолечĕсем Суэц канал районĕ çине пырса тапăннă: пĕр çын вилнĕ, 5 çын аманнă. Хăшпĕр материаллă сиен кӳнĕ.

Сентябрĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле противник авиацийĕ Мальта районĕнче пĕр-пĕринчен инçетри районсем çине фугаслă тата вут тивретекен темиçе бомба пăрахнă. 3 çын аманнă, пысăк мар сиен кӳнĕ.

Англи авиацийĕ Берлин çине тапăнни çинчен Америка пичечĕ мĕн çырать

ЛОНДОН, сентябрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин Нью-Йоркри корреспонденчĕ çапла пĕлтернĕ: Англи авиацийĕ нумай пулмасть Берлин çине пырса тапăнни çинчен пĕлтерни Америкăри хаçатсен пĕрремĕш страницисенче тĕп вырăн йышăнса тăрать. «Англи авиацийĕн бомбардировщикĕсем Берлин çине хаярăн пырса бомбăсем пăрахрĕç», — тесе çырать «Нью-Йорк джорнэл энд американ» хаçат. «Англи авиацийĕ хăрушлăн тапăннă вăхăтра Берлин çĕрĕпех чĕтресе тăнă», — тесе пĕлтерет «Нью-Йорк уролд телеграмм» хаçат. Берлин çине пырса тапăнни çинчен панă пĕлтерӳре çуртиĕрсем тата чӳречесем çĕрĕпех чĕтресе, янăраса тăни çинчен каласа панă. Берлинран пĕлтернĕ тăрăх, артиллерирен вăйлăн персе тăнă пулсан та, самолетсен моторĕсем кĕрленĕ сасă хулара уççăнах илтĕнсе тăнă.

Германи çарĕнче продовольстви çителĕксĕрри ытларах та ытларах сисĕнтерет. Выçă салтаксем таврари ялсемпе саласем тăрăх саланса, вырăнти халăха çаратса çӳреççĕ. Нимĕçсен командованийĕ çак мародерствăна пур майсемпе те хавхалантарса пырать. Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕçсенчен туртса илнĕ трофейăсем хушшинче пĕр интереслă япала тупнă. Нимĕç противогазĕн металран тунă футлярĕ ăшĕнче противогаз вырăнне... çĕрулми тупнă. Противогазне салтак футляртан кăларса ывăтнă пулнă. **Уйрăлăк çинче:** командирпа боец туртса илнĕ трофейăна пăхаççĕ.

Л. ВЕЛИКЖАНИН фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС).

Шкулсенче

ВĂРНАР. Район центрĕнчи вăтам шкулта вĕренекен ачасем патне, нумай пулмасть, действующи Хĕрлĕ Çартан политрук заместителĕсем Турлышкинпа Сергеев юлташсем, хăйсем çак шкулта вĕренсе тухнăскерсем, çыру янă. Вĕсем ачасене çарпа физкультурăпа ĕçне тимлĕн вĕренме, Хĕрлĕ Çара кайиччен лайăх пиçĕхсе хатĕрленме чĕнеççĕ.

Шкул ачисем хăйсен аслă юлташĕсем чĕннине ĕçпе ответлеме сăмах паraççĕ. Кăçал çар ĕçне вĕренме шкулпин тенкĕлĕх ытла тĕрлĕ пособисем илнĕ. Халĕ шкулта аслăрах классенче çарпа физкультура ĕçне çирĕп расписани тăрăх вĕрентме тытăннă. Массăллă оборона кружокĕсем те хăйсен ĕçĕсене вăйлатаççĕ.

В. МАКСИМОВ.

* * *

ÇĔМĔРЛЕ. Хутар вăтам шкулĕнче вĕренӳ çулĕн малтанхи кунĕнчен пуçласах классем пĕр-пĕринпе социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Çапла, 9-мĕш «Б» класпа 9-мĕш «А» класс ăмăрту договорĕ турĕç. Ачасен вĕренĕс хастарлăхĕ пысăк. Вĕсем пурте шкула пĕр сиктермесĕр çӳреççĕ, уроксене тимлĕн итлеççĕ.

Уроксем пуçланиччен кашни класра политинформацисем пулса иртеççĕ. Куна Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернисене вуласа параççĕ. Çакă вăл ачасен шухăш-кăмăлне татах та ытларах çĕклет.

Ачасем çарпа физкультура ĕçне вĕренме уйрăмах активлăн тытăнаççĕ. Вĕренӳ çулĕ пуçланиччен шкул коллективĕн вăйĕпе пысăк физкультплощадка тунă. Çар ĕçĕпе аслăрах классенчи ачасем çеç мар, тин вĕренме тытăнакан пĕчĕк ачасем те интересленеççĕ. Çапла, А. Благоразумова юлташ вĕрентекен пĕрремĕш класри ачасем стройпа утма юраташ, отечественнăй аслă вăрçă çинчен каласа панине питĕ тимлесе итлеççĕ.

Малтанхи кунах кашни класра ачасен пухăвĕсем пулса иртрĕç, класри организаторсене суйларĕç, вĕренӳ ĕçне мĕнле йĕркелемелли çинчен сӳтсе явăрçĕ.

Ачасем илемлĕ литература вулама юраташ. Малтанхи кунах шкул библиотекинчен 52 ача, колхозри библиотекăран 31 ача вулама тĕрлĕ кĕнекесем илнĕ.

С. БАТЬКОВ.

Оборонăллă çĕнĕ кĕнекесем

М. РУЗОВ. «Старший лейтенант Хорин танкĕ». Чăваш АССР Госиздарство издательстви. Шупашкар. 1941 с. Тираж 2500 экз. Хакĕ 10 пус.

М. Рузов хăйĕн корреспонденцийĕнче старший лейтенант Константин Хорин командир пулса ертсе пыракан танк батальонĕн паттăрла ĕçĕсем çинчен каласа парать.

Пĕррехинче Хорин хăйĕн командинче 14 танкпа тăшманăн питĕ пысăк соединенине аркатса тăкать. «Кĕске, анчах хĕрӳ çапăçу хыççăн шоссе çине тăшманăн 12 танк, 8 йывăр оруди, 200 мотоциклет, 5 транспортнăй машина тата боеприпассем тиенĕ прицепсем нумай юлчĕç», тет М. Рузов.

«Тăван çĕршывшăн, аслă Сталиншăн!». Сăвăсемпе юрăсем. Тираж 2500 экз. Хакĕ 1 т. 25 пус.

Сборникре Чăваш АССР Халăх поэчĕ, орденоносец Н. И. Шелеби, А. Эскель, Ухсай Яккăвĕ, П. Хузангай, Уйăп Миши, И. Тукташ, Ивник, Кăлкан, Н. Васянка т. ыт. юлашки вăхăтра çырнă оборонăллă сăвăсемпе юрăсем кĕнĕ.

Кĕнеке шкулсенче, клубсенче усă курма паха пособи пулса тăрать.

Альманахăн 7-мĕш кĕнеки

Çак кунсенче Чăваш Совет писателĕсен Союзĕ кăларакан «Илемлĕ литература» альманахăн 7-мĕш кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Номер Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ 1941 çулти июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă историллĕ сăмахпа уçăлать.

«Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче» текен уйрăма виçĕ боевой эпизод пичетленнĕ.

Оригиналлă проза пайĕнче Кузьма Сергеевăн оборонăллă тăватă калавĕ, Е. Эллиевăн «Эрхип» тата Иван Моисăй «Пускилсем» ятлă калавĕсем пичетленнĕ.

Поэзи пайĕнче В. Усли çырнă «Иван Моргун» поэма чылаях интереслă. Поэмăра В. Усли нимĕçсен Украинăри оккупацийĕ çинчен, вĕсем украинецсене тискер кайăкла асаплантарнисем, мăшăлланисем çинчен каласа парать.

Поэзи пайĕнчех И. Тукташăн, Ухсай Яккăвĕн тата Ивникăн оборонăллă çĕнĕ сăввисем пичетленнĕ.

Урăх чĕлхесенчен куçарнисенчен Венгрин революциллĕ писателĕ Шандор Гергель çырнă «Кашкăрсем» ятлă калав питĕ интереслă. Калавра писатель-коммунист Венгрири фашистланнă улпут-хуçасем выçă халăха кашкăрла пусмăрланинне сăнласа парать.

Альманахăн ку кĕнекинче те фольклор пайĕ те, критикăпа библиографи те, «Архивра» текен уйрăм та пур.

Çĕнĕ заем укçине пухаççĕ

КАНАШ. Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заема Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем нумайĕшĕ 100-шер тенкĕлĕх çырăнса, укçине те тӳлесе татрĕç. Çĕнĕ заема колхозниксем пурĕ 1325 тенкĕлĕх çырăнса илнĕ. Унтан 1202 тенкĕ заем укçине пухса перекет кассине кайса хывнă та ĕнтĕ. Çак кунсенчех заемшăн 100 процентчĕпех тӳлесе татаççĕ.

Е. АНИСИМОВА.

Турци хаçачĕсем вăрçă перспективисем çинчен

СТАМБУЛ, сентябрĕн 5-мĕш. (ТАСС). «Тан» хаçатра унăн главнăй редакторĕн Зекерий Сертелĕн статйине пичетлесе кăларнă. Сертель хăйĕн статйинче вăрçăн икĕ çулхи итогĕсем çинчен сутатса панă. Автор çапла шутлать: вăрçăн малтанхи çулĕ Германишĕн лайăхрах пулнă, вăл Европăри чылай çĕршывсене хăвăрт оккупацилеме пултарнă. Вăрçăн иккĕмĕш çулĕнче Германишĕн нумай ăнăçсăрлăхсем пулнă. Германи, — тесе çырать автор,— Африкăра çĕнтерӳ тума пултараймарĕ, Англи утравĕсем çине кĕрсе каяссипачах ăнăçсăр пулчĕ, англичансене Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнчен хĕссе кăларма вăйсăр пулчĕ. Чи палли вăл — Россия çине тăрса хирĕç тăнипе кĕтмен событи пулса тăчĕ. Çакă вара германецсене хĕл условийĕсенчи вăрçа хатĕрленме хушать. Хĕл сывхарса килнĕ май Германири лару-тăру татах та начарланать.

«Акшан» хаçатăн главнăй редакторĕ Садак Хĕрлĕ Çар Германие хирĕç нихăçанхи пек та мар вăйлăн хирĕç тăнине паллă тăвать. Çавăн пек хирĕç тăнине нимĕçсем нихăçан та тĕл пулман, тен вĕсем Россипăра çавăн пек пуласса кĕтмен те пулĕ. Хĕрлĕ Çар хăй тухса каякан вырăнта мĕнпур япаласене пĕтĕмпех пĕтерсе хăварать. Çакă та вара пысăк фронтра Германине япаласем парса тăрас тĕлĕшпе пысăк йывăрлăхсем кăларса тăратать Германия пысăк фронта хăйĕн мĕнпур вăйне пухать, анчах ăна хирĕç пур çĕрте те Хĕрлĕ Çар çине тăрса хирĕç тăрать. Германие хирĕç советăн миллионлăр çыннисем тата Англипе Америкăн вăйлă промышленноçĕсем хирĕç тăраççĕ.

Славян халăхĕсен США-ри организацийĕсем Совет Союзĕпе пĕр шухăшлă

НЬЮ-ЙОРК. (ТАСС). Америка пичечĕ Пĕрлешӳллĕ Штатсенче пурăнакан вырăссем тата ытти славянсем хушшинче Совет Союзĕпе пĕр шухăшлă пулса тăнин движенийĕ ӳссе пыни çинчен пĕлтерет.

«Вырăссен пĕр-пĕрне пулăшса пыракан православнăй тата католически обществи», хăйĕн ретĕнче 6 пин члена пĕрлештерсе тăракансикер, çавăн пекех 8 пин членран тăракан «Вырăссен пĕрлешӳллĕ православнăй тăванлăхĕ» чĕнӳ кăларнă, унта вĕсем Совет Российи çине ултавлăн тапăннă Гитлер бандисене хирĕç туса пыракан кĕрешӳре Совет Союзне анлăн пулăшса пыма чĕнсе каланă. США-ра 16 пин члена пĕрлештерсе тăракан «Русское братство» обществăн хаçачĕ Сталин юлташ сăмахĕн пĕтĕм текстне пичетлесе кăларнă. Совет Союзне пулăшас ĕçе хирĕç пыракан «сутăнчăксене, предательсене тата Гитлерăн кирек мĕнле агенчĕсене» хаçат хирĕç çырать.

Славян халăхĕсен митингĕсем США-ри нумай районсенче пулса иртнĕ. Бостонри митингра пĕтшер вырăссем-çыпăçлăхне украинецсем пулнă, вĕсем Рузвельта Совет Союзне пулăшма чĕнсе резолюци йышăннă. Нумай митингсенче Совет Союзне пулăшмалли фонд валли средствăсем пухаççĕ. Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, «Рабочисен пулăшăвĕн пĕтĕм тĕнчери обществи» Совет Союзне пулăшмалли фонда 2200 доллар ытла укçа пухса панă. Ытти организацисем те çавăн пек средствăсене пухаççĕ.

США-ра тухса тăракан «Укрейниен дейли ньюс» хаçат «Америкăри украинецсен лигийĕн» тата «Рабочисен пулăшăвĕн пĕтĕм тĕнчери обществин» Украина секцийĕн чĕнĕвне пичетлесе кăларнă, унта Америкăра пурăнакан мĕнпур украинецсене Совет Союзне медицина енчен пулăшмалли фонда средствăсем пама чĕннĕ.

Словаксен Чикагора тухса тăракан «Людовы денник» хаçачĕ Хĕрлĕ Çара тата Совет Союзăн территоринче çапăçма пуçлакан Чехословаки войскисене медицина енĕпе пулăшу памалли фонда валли средствăсем пухма тытăннă.

Поль Колетта допрос туни

БЕРН, сентябрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Кунта килнĕ сведенисем тăрăх, Поль Колетт допросра вăл голлльевец пулса тăни тата вăл Германипе пĕрле сыхăнса тăнине хирĕç пулни çинчен пĕлтернĕ. «Кан хулинчен тухса каяс чухне, — тенĕ Колетт, — Германипе пĕрле сыхăнса тăрасси майлă тăракан пĕр-пĕр паллă сынна вĕлерме çирĕпленĕ шут тытрăм. Мана Лаваль тĕл пулчĕ, эпĕ ăна потĕм».

Вырăсла вĕренни

(Фельетон)

Хĕрлĕ Çар чаçĕсене хирĕç икĕ хутчен çĕнтерӳллĕ наступлени тунă хыççăн, унтер-офицер Вилли фон Брудершафт-Закуске служить тăвакан пехотнăй полкран шăп кăна хĕрĕх икĕ сын та вунвиçĕ винтовка тăрса юлнă. Пĕр пессимистларах сăнлă лаша та пулнă вĕсен, анчах вăл паттăр полк çĕнĕ позици йышăнма хăюллăн каялла чакнă чух партизансем патне тарса ӳкнĕ.

«Ухмах мар ку лаша, — тесе шутлать унтер-офицер Вилли фон Брудершафт-Закуске хăйĕн ăшĕнче. — Эпĕ пĕртте айăплама пултараймастăп ку лашана. Фронтра япаласем туянас тĕлĕшрен мĕнле усламлă пулсан та, манăн хамăн шухăшсем те темшĕн питпе тыл еннелле çавăрăнаççĕ. Вырăссене хирĕç тепрер çĕнтерӳллĕ наступленине кайсан, мана хама та... леш... как калас... котлет туса хума пултараççĕ. Урасем сывă чух...»

Хăвăрах куратăр ĕнтĕ, паттăр унтер-офицер Вилли фон Брудершафт-Закуске кирлĕ вăхăтра шутлама та пултарнă. Вăл çеç те мар, тепĕр чухне вăл çурăм тирĕсене сĕвес ĕçĕн мастерне, — Гиммлера килĕшӳллĕ мар шухăшсен вĕçне çăтса яма та ăс çитернĕ.

Тыл ăшиелле вăтăр километрлă поход туса, çĕнĕ позици йышăнсанах паттăр унтер-офицер Вилли фон Брудершафт-Закуске полковник хваттерне пырса кĕнĕ. Куçĕ-пуçĕсене тавăрса пăрахса, урисене шаклаттарнă та вăл полковника честь панă.

— Герр полковник, — тенĕ вăл, — сире шанса панă полкри унтер-офицер Брудершафт-Закуске сирĕнпе виçĕ сăмах калаçасшăн. Хейль!

— Хейль, — тенĕ полковник йӳçĕ хăяр çинĕ хыççăнхи пек тутисене пăркаласа. — Каласа пултаратăр. Мĕн каласшăнчĕ?

Çав вăхăтра таçта алăк хыттăн шатлатса хупăннă. Хăюллă унтер-офицер сӳсенсе, пĕрĕнсе илнĕ те кăмака хӳттинерех тĕршĕннĕ.

— Эпĕ... — тенĕ вăл, темшĕн чĕлхи сыхланнипе аптраса. — Эпĕ... мĕн... Куна партизансем пемерĕç пуль? — Анчах нимĕн те йăтăнса анманнине кура вăл сийĕнчех урăх тонпа калаçма пуçланă: — Эпĕ рапорт парас тетĕп...

— Мĕнле рапорт? — ăнланайман полковник.

— Çаплах, — тенĕ унтер-офицер. — Эпĕ киле... хамăн ĕлĕкхи професси патне таврăнас тетĕп.

— Мĕнле професси пулнă вара сирĕн килте чухне?

— Эпĕ Лейпцигра пурнакан белогвардеецсем хушшинче тăлмач пулса ĕçлесеттĕм.

— Тăлмач?

— Тăлмач çав.

— Ăçта вĕреннĕ вара эсир вырăсла калаçма?

Унтер-офицер Вилли фон Брудершафт-Закуске темĕн аса илсе, сисĕнмеллех кăвакарса кайнă.

— Ăçти-мĕнĕ... — тенĕ вăл, темшĕн шиклĕн йĕри-тавра пăхкаласа. — Вĕрентсе янăччĕ пире пăртак...

— Ăçта вĕрентнĕччĕ?

— Эпĕ... мĕн... хам вĕреннĕ тесшĕнччĕ... Çапла çав, вĕрентнĕччĕ пире...

Паттăр унтер-офицер ăман пек авкаланнă, анчах полковник мĕнле пăвăртса ыйтсан та, хăй вырăсла ăçта вĕреннине каламан.

— Эпĕ çapa хам ирĕкпе килнĕччĕ, халĕ хам ирĕкпех киле таврăнас тетĕп. Манăн срок тухрĕ, — тенĕ вăл.

Полковникĕ те тĕпчевçĕ пулнă курăнать. Ыйту хыççăн ыйту панă:

— Мĕнле срок пирки калаçатăр çак эсир, унтер-офицер Брудершафт?

— Ара, большевиксене икĕ эрне хушшинчех парăнтаратпăр тенĕччĕ те...

Ку сăмахсем унтер-офицер пурнăçĕнче пысăк йăнăш пулнă. Вăл шухăшне каласа та пĕтереймен, хăй карцерта ларнине асăрханă.

Карцертан тухсан паттăр унтер-офицер Вилли фон Брудершафт каллех капитанпа тĕлпулнă.

— Ну, ватă вояка, халĕ те киле таврăнас килет-и-ха сирĕн? — ыйтнă капитан.

Хăюллă унтер-офицерăн текех тĕттĕм камерăна кĕрсе ларасси килмен пулас: вăл ырă та, усал та чĕнмен.

— Аван, аван! — тенĕ капитан. — Сирĕншĕн карцер усăллă пулчĕ пулмалла. Хам та çаплах шутланăччĕ... Вырăсла чылаях ăста пĕлетĕр-и вара эсир?

— Пĕлкелетĕп кăштах, — тенĕ ватă вояка. — Белогвардеецсемпе пĕр-пĕрине ăнланаканччĕ... Вĕрентнĕччĕ пире...

— Ăçта вĕрентнĕччĕ терĕр çак?

Ку тĕлте хăюллă вояка Вилли фон Брудершафт-Закуске каллех темĕн аса илсе, кăвакарса кайнă. Анчах хăй вырăсла ăçта вĕреннине нимĕн те шарламан.

— Юрать, — тенĕ капитан. — Вырăсла кăшт-кăшт çеç пĕлетпĕр тетĕр. Фронтра ак полнăй курсах вĕренсе тухăр. Кĕçех белогвардеецсенчен организацилеме пополнени килмелле... Мĕнле сăмахсем пĕлетĕр вара эсир вырăсла?

— Эпĕ вĕсене блок-нотес çине çырса хунă, — тенĕ фон Брудершафт-Закуске. — Урăх чухне кăтартăп...

Анчах урăх чухне кăтартма май килмен, тепĕр виçĕ кунтан хăюллă унтер-офицер фронтра вырăс чĕлхине «полнăй курсах» вĕренсе пĕтернĕ: вырăс бомби тăлмачăн пуçне татса, сĕлĕ пĕрчи пек ватса тăкнă. Çĕнĕрен организацилеме полкран хальхинче пурĕ те Вилли фон Брудершафтăн вилли тата полковникпа тепĕр белогвардеец кăна тăрса юлнă. Ыттисене вырăс бомбисем тĕппипех çĕрпе варăнтарнă.

Тылра каннă чух нимĕç полковникĕ фон Брудершафтăн блок-нотне пăхса тухнă. Вара тинех хăюллă вояка вырăсла ăçта тала мĕнле вĕреннине таврăсарса илнĕ.

Блок-нотра çапла çырнă пулнă икен:

«1918 çул. Украина.

Енсе (подзатыльник). Енсерен парасçĕ. Кама ĕнсерен парасçĕ? Пире, нимĕçсене ĕнсерен парасçĕ. Камсем? Украинецсем, вырăс мужикĕсем, белоруссем... Мĕнпе? Винтовкăсемпе, сенĕксемпе. Чикĕ тулашне кăларса ывăтрĕç (выбросили через границу)...

1941 çул.

Урра (Гох тенĕ евĕр). Кунĕ-кунĕпе хăлхара çав сăмах янраса тăрать. Сывлама çук (невозможно дышать). Ак каллех вырăс бомбардировщикĕсем пуç...»

Юлашки вырăсла вĕренине вара вырăсла куçарма мар, çырса та пĕтереймен иккен. «Пуç...» тенĕ те — хăй пуссăр тăрса юлнă.

Ф. УЯР.

Ответлă редакторăн обязанноçĕсене туса пыракан С. К. КОНСТАНТИНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 6515

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 448. Ф. б. 98 84 п. л.